# Авалхи Аслă Пăлхар тĕп хулинче

**Чăваш хастарĕсем, хамăр республикăра, Мускавра, Тутарстанра, Пушкăртстанра, Чĕмпĕр, Самар, Пенза облаçĕсенче тата ытти хутлăхра пурăнакансем, хăйсен укçи-тенкипе кашни çулах çула тухаççĕ, пирĕн несĕлĕмĕрсем ĕлĕк-авал пурăннă вырăнсене çитсе килеççĕ. Кăçалхи çулçÿрев 30-мĕш пулчĕ, ку хутĕнче вĕсем Кубрат хан никĕсленĕ Аслă Пăлхар патшалăхĕн тĕп хули пулнă Ханакур (вырăсла – Фанагория) хулинче, çавăн пекех Севастополь хулинче пулчĕç. Кусем, мĕнле калас, çулăн вĕçĕнчи тĕлĕсем, унсăр пуçне чăвашсем пурăнакан ялсенче темиçе тĕлпулу иртерĕç, унти йăхташăмăрсене концерт лартса савăнтарнă. Çулçÿреве хальхинче те 30 çул каялла ВЛКСМ Чăваш обкомĕн идеологи пайĕн ертÿçи пулнă чухнех çак ĕçе пуçарса янă Олег Цыпленков (халĕ вăл Чăваш çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлешĕвĕн хисеплĕ элтеперĕ, ăна чылайăшĕ Ултияр чăваш ячĕпе пĕлет, эпĕ те Олег Михайловича çак ятпах чĕнтĕм калаçура) йĕркелерĕ, ăна редакци кĕрекине йыхравларăмăр та.**

**– Ултияр, тĕрĕссипе ахаль çулçÿрев кăна мар-ха ку сирĕн, «Чунçÿрев» тетĕр эсир ăна, каласа ăнлантар-ха вулакана мĕншĕн апла каланине.**

– Çулçÿрев тени вырăсла калас пулсан «путешествие» ăнлава пĕлтерет. Пирĕн вăл çак картаран тухса тăрать, ахаль курса çÿреме кăна çула тухмастпăр эпир, çак хушăра вун-вун, çĕр-çĕр чăвашпа тĕлпулатпăр, концертсем лартса халăха савăнтаратпăр, чÿк тăватпăр, несĕлсене сăвапласа юпасем лартатпăр, вырăнти чăвашсен сăмахлăхне (юрри-такмакне, пил-кĕлĕ сăмахĕсене) пухатпăр. Тата эпир ахаль-махаль вырăнсене мар, чăвашсемпе несĕллĕ йăхсен аваллăхĕпе çыхăннă вырăнсене çÿретпĕр, çав çĕрсенче канлĕх тупнă мăн асаттесен чунĕсенчен вăй илсе таврăнатпăр. Пирĕн вăл вырăсла куçарас пулсан «паломничество» ăнлава çывăхрах. Эпир çак сăмаха чылай вăхăт шырарăмăр, пĕррехинче вара, Пăлхар хулинче Атăл хĕрринче ларнă чухне, калаçура хăйне хăех çуралчĕ.

Акă, мăсăльмансем Меккăна кайса килеççĕ те, «хаджи» пулса тăраççĕ. Урăхла каласан, хадж йĕркине пурнăçланăскере, Меккăна çитсе килнĕскере хисеплесе çапла чĕнеççĕ. Эпир те чунçÿреве хутшăннă хастарсене чунташсем тетпĕр, чунташ – чунçÿреврe пулнă çын чăваш.

**– Кăçалхи чунçÿрев патне çитĕпĕр-ха, çак йăла хăçан, мĕнле пуçланса кайнине пĕлтерес килет вулакана чи малтанах.**

– 1990 çулхине пĕрремĕш хут Пăлхар хулине çул тытрăмăр. Эпĕ ун чухне комсомолăн идеологи пайĕн ертÿçинче ĕçлеттĕм. Тĕрĕссипе, вăл вăхăтра чылай çамăлрахчĕ, комсомолăн хăйĕн автобусĕсем пурччĕ, укçи-тенки... Пăлхар çинчен илтнĕ-ха ĕнтĕ эпир, анчах пĕри те пулса курманччĕ. Çитрĕмĕр те, сакăр кĕтеслĕ мавзолейсене, несĕлĕмĕрсен вил тăприйĕсем çине лартнă пулнă юпасене куртăмăр та – куççуль тухрĕ. Ку пирĕн истори вĕт-ха, ку пирĕн аваллăх! Ун чухне кашни пĕрер хутаç авалхи чÿлмек ванчăкĕсене пухса таврăннăччĕ. Çавăн чухне тупа турăмăр та: çакнашкал çулçÿревсене (ун чухне «Чунçÿрев» сăмаха шутласа кăларайманччĕ-ха) кашни çулах ирттермелле.

Тепĕр çул та Пăлхара кайрăмăр, анчах ку хутĕнче Атăл тăрăх «Метеорпа». «Тепĕр çул Сăвар хулине çитсе курсан аванччĕ», – текенсем пулчĕç. Анчах никам та пĕлмест Сăвар ăçтарах вырнаçнине, пĕлеççĕ Кузнечиха текен ял çывăхĕнчине, анчах тĕплĕ пĕлекен çук. 1993 çулхине каллех Пăлхара çул тытрăмăр, 3 автобуса таран. Ун чухне Чăваш Енрен кăна мар, Чĕмпĕртен, Самартан, Тутарстанран, Пушкăртстанран, Пензăран пухăнса килнĕччĕ чăваш хастарĕсем. Пăлхар хыççăн вара Сăвара çул тытрăмăр. Тĕрĕссипе, каллех куççуль шапăртатса юхрĕ: хула пулнă вырăна талккăшпех сухаласа пăрахнă, аяккинчен пăхса хир хĕп-хĕрлĕ курăнать – чÿлмек татăкĕсем çиелтех выртаççĕ. Халĕ ку вырăнта сухалама чарнă, археологсем ĕçлеççĕ.

Çавăн пек сарăлса, аслăланса пычĕç пирĕн çулсем, çитес çулхине тата Пÿлер хулине те çитрĕмĕр, Валем хусан çăлкуçĕ патне пыракан сукмак хĕрринче



*«Пин çул ытла пăлхарччĕ эп...» конкурс саманчĕ.*

тата чăвашсен Киремет вырăнĕ пулнă çĕрте юпасем лартса хăвартăмăр. Киремет юпи халь те ларать, унта чăвашсем тĕрлĕ хăюсем, тутăрсем çыхса хăвараççĕ. Сăмах май, халĕ эпир кашни çулах – ăçта каятпăр, пур тĕлте те – юпа е темиçе юпа та лартса хăваратпăр. Çак ырă йăлана 1994 çулта **Федор Мадуров** кÿлепеçĕ пуçларĕ, ун чухне пуçласа Сăвар хулашĕнче юпа, хăй укçипе юман пĕрене туянса, хăй чутласа лартрĕ.

**– Ултияр, вара çак хушăра юпа ăçта-ăçта лартрăр, ăçта-ăçта çитсе куртăр?**

– Юпине ăçта çитнĕ пур тĕле те лартма тăрăшнă: Туçи Алтайра, Казахстанра, Азербайджанра, Крымра, Дагестанра... Тепĕр чухне вырăнти влаçсем ирĕк паман самантсем те пулнă, анчах ÿкĕте кĕртейрĕмĕр. Сăмахран, Тобольск хулинче Чăваш тăвĕ пур, унта Ермака асăнса палăк лартнă, пире юпа ларттарасшăн пулмарĕç, юлашкинчен ирĕк пачĕçех, халь чăваш юпи Ермакпа юнашарах темелле. Туçи Алтайра та лартрăмăр, вĕсем вырăнти саккунĕ çапла тума чарать пулсан та. Эпир ун чухне алтайсен Эл-Ойын (пирĕн Акатуй евĕрлĕ) уявне лекрĕмĕр, унта вĕсен премьер-министрĕн çумĕ те пурччĕ, вăл пире ирĕк пачĕ те. Азербайджанпа Иран чикки çывăхĕнче Билясувар пĕчĕк хула пур, унта та, **Гейдар Алиева** асăнса лартнă палăкран инçех те мар, чăваш юпине лартса хăвартăмăр.

**– Хули çавнашкал ятлă-и? Биляр, Сувар ятсем çавăнта та сыхланса юлнă-и?**

– Çапла. Çак хула çывăхĕнче юхса иртекен шыв ячĕ вара – Булгар. Ун пек чăваш ячĕсем пур тĕлте те тĕлпулаççĕ. Сăмахран, **Василий Шукшин** çуралнă яла пурте Сростки теççĕ. Анчах та ку ял темиçе пĕчĕк ял пĕрлешнипе пулнă иккен, Шукшин çуралнă ялне Учук тенĕ. Халĕ «Шукшинские чтения» литература фестивалĕ иртекен сăрт ячĕ те Учук.

**– Питĕ кăсăк... Кăçалхи чунçÿрев патне таврăнăр-ха: ăçта-ăçта çитрĕр, мĕн-мĕн турăр ку хутĕнче?**

– 43 çын вырнаçакан автобуспа 37-ĕн çула тухрăмăр. Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçĕнче, Тикеш хулашĕ вырăнĕнче, Турханта, паллă ÿнерçĕ **Алексей Кокель** çуралнă ялта пултăмăр, Самар тăрăхĕнчи Çăлкуç ялĕнче чăвашсене концертпа савăнтарса хăвартăмăр. Çурла уйăхĕн 3-мĕшĕнче ирхи 3 сехетре Ханакур хули çумĕнчи Веселовка текен ял патне çитсе вырнаçрăмăр. Пире унта Мускавран маларах çитнĕ **Владимир Болгарский** адвокат кĕтсе илчĕ. Тĕрĕссипе, вăл кăна мар-ха, Хура тинĕсри икĕ дельфин та эпир çитнипе ниçта кайса савăнчĕç. Пирĕнпе пĕрле Елчĕк районĕнчи Вăрăмхăвари пултаруллă пике **Лиза Казначеева** та пыраччĕ, вăл çав кунхине шăпах 14 тултарчĕ – эх, мĕн тери саламларĕç пĕрремĕш хут тинĕс куракан хĕрачана дельфинсем! Кунта Владимир Болгарский йĕркеленĕ «Пин çул ытла пăлхарччĕ эп...» поэзи фестивалĕ-конкурсĕ иртрĕ. 5-мĕшĕнче вара Севастополь çумĕнчи Любимовка поселокне çитрĕмĕр те, пилĕк кун шывран тухмасăр кантăмăр. 11-мĕшĕнче Севастопольти «Лукоморье» кану паркĕнче чăваш культурин кунне ирттертĕмĕр. Унта Севастопольти, Симферопольти, Керчьри, Феодосири, Евпаторири вун-вун чăваш пынăччĕ, савăннипе куççуль кăларакансем те пулчĕç: вĕсем пире çулсеренех килсе çÿреме тархасларĕç, чăваш сăмахĕшĕн, юрри-ташшишĕн питĕ тунсăхлаççĕ унти чăвашсем.

**– Поэзи фестивалĕ-конкурсĕ мĕнлерех иртрĕ? Унашкаллине халиччен йĕркелеменччĕ пулас-ха эсир?**

– Поэтсем пирĕнпе тăташах çула тухаççĕ, поэзи каçĕсем, фестивальсем яланах ирттерекенĕ. Анчах сăвă калакансем конкурсне йĕркелени пулманччĕ пулас, чăн та. Шухăшĕ ку, каларăм ĕнтĕ, Владимир Болгарский юристăн. Сăмах май, Ханакурта лартнă чул-палăка та вăлах тума укça уйăрнă. Конкурса хутшăнакансен Петĕр Хусанкайăн «Пин çул ытла пăлхарччĕ эп...» сăввине, хăйсен çырнине тата пĕр урăх сăвă каламаллаччĕ. Вĕсен пултарулăхне **Валери Туркай**, **Раиса Сарпи**, **Евгений Турхан** поэтсем пахаларĕç. Кăçхине вара конкурс йĕркелÿçи çĕнтерÿçĕсен ячĕпе така пусрĕ, шÿрпе пĕçертĕмĕр.

**– Ултияр, Ханакурта мĕн те пулсан курмалли пур-и вара?**




*Ханакурта чăваш палăкĕ те пур.*

– Тĕрĕссипе, курăмли те ĕлĕк-авал кермен пулнă çурт никĕсĕсем çеç. Аваллăх йăлтах шыв айне пулнă, хăйăрпа хупланнă. Халĕ кунта тăтăш археологсем ĕçлеççĕ.

**– Вулакана кăштах тĕплĕнрех каласа ăнлантар-ха, мĕншĕн çывăх ку авалхи хула чăвашсемшĕн?**

– Ханакур Аслă Пăлхар патшалăхĕн тĕп хули пулнă. Аслă Пăлхар патшалăхне **Кубрат хан** никĕсленĕ, вăл тĕрлĕ-тĕрлĕ йăхсене пĕрлештерсе çирĕп патшалăх тума пултарнă, вĕсем Византипе туслă пурăннă, вăл вăхăтри вăйлă Авар тата Хазар каганачĕсене те парăнман. Анчах та Кубрат хан вилсен унăн 5 ывăлĕ ашшĕне итлемен, саланса кайнă: асли **Батбаян** унтах юлнă, анчах хавшакланнăскер хазарсене хырçă тÿлеме пуçланă; иккĕмĕшĕ **Кăтрак** Атăл çине хăпарнă та Атăлçи Пăлхар патшалăхне никĕсленĕ; виççĕмĕшĕ **Аспарух** Дунай тăрăхне кайнă, унти славян йăхĕсемпе килĕшÿ туса Пăлхар патшалăхне никĕсленĕ; тăваттăмĕшĕ **Кубер** йăхсен пĕр пайне Македоние ертсе кайнă; пиллĕкмĕшĕ **Альцек** Италие çитсе тĕпленнĕ.

Ывăлĕсене пĕрле пулма шăпăр тĕслĕхĕ çинче вĕрентни (çыхнă шăпăра ывăлĕсенчен пĕри те хуçаймасть, салтсан вара, кашни хуллине пĕчченшерĕн çăмăллăнах хуçма пулать) çинчен тĕрлĕ халап пур. Чи малтан шăпах Кубрат хан хăйĕн ывăлĕсене çапла вĕрентнĕ тет, анчах лешсем итлесе темен ашшĕне...

**– Ултияр, тепĕр çул ăçта çул тытасшăн?**

– Хальлĕхе калама хĕнтерех-ха. Таçта та чĕнеççĕ: Байкал тăрăхĕнчи чăвашсем тахçанах йыхравлаççĕ, Казахстанри туссем кĕтеççĕ, Дагестанри пирĕнпе тăванла нухайсемпе кумуксем те шăнкăравласах тăраççĕ... Тахçанах Грузири Арамаçи тăвĕ патне çитсе килесшĕн, вăл та чăвашсен несĕлĕсемпе çыхăннă вырăн тесе шутлатпăр. Ахальтен чăвашсен авалхи халапĕсенче улăпсем Арамаçи тăвĕ çинчен анни çинчен каламан-тăр.

**– Тавах кăсăк калаçушăн, çак сăвапла ĕçре сана та, ытти чунташсене те ăнăçу сунатăп.**

**Владислав НИКОЛАЕВ,**
**Олег ЦЫПЛЕНКОВ** сăнÿкерчĕкĕсем



*Чунташсем тинĕс хĕрринче палаткăсенче пурăнаççĕ.*